44-111

Леонид Агаков

ПĔЧĔК ПАРТИЗАНСЕМ

ЧĂВАШГОСИЗДАТ — 1944

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ПĔЧĔК ПАРТИЗАНСЕМ

Пĕрре сĕм вăрманти çырмана партизансен командирĕ Иван Кузьмич Макеев патне икĕ ачана илсе пычĕç.

— Кам ячĕ сире кунта? Ăçтисем эсир?—тесе ыйтрĕ вĕсенчен командир.

— Пире никам та яман, эпир хамăрах килтĕмĕр... Андреевка салинчен...—куçĕсене мăчлаттарса илчĕ пĕр ачи.

— Кунта килме епле пĕлтĕр эппин? Кам та пулин çул кăтартса ячĕ-и? Е хăвăрах тупрăр?

— Эпир... эпир, Иван Кузьмич, сире пилĕк кун шыратпăр ĕнтĕ, аран тупрăмăр!

Командира ку ачасем хытах интереслеме пуçларĕç.

— Ну, ну... Мана ăçтан пĕлетĕр тата?

— Сана-и? Сана пĕлмен çын та çук пулĕ? Эп хам сана вИçĕм çултанпах паллатăп, эс пирĕн атте патне темиçе хут та пынă, пĕрре ман вырăн çинче те çывăртăн,—терĕ пĕр ачи.

Ку сăмахсем хыççăн партизансен командирĕ тем аса илнĕ пек пулса тăчĕ.

— Эсĕ Парфён Ветлугин ывăлĕ мар пуль вĕт?

— Çавăн.

— Апла пулсан тĕлĕнмелли çук, паллах, эсĕ мана пĕлме кирлĕ. Сирĕн патăрта пулкалана эпĕ, тĕрĕс...—Аван çынччĕ сирĕн аçу, колхоза яланах йĕркеллĕ ертсе пыратчĕ. Нимĕçсем ăна персе пăрахнă тенине илтсен—питĕ хытă хĕрхентĕм... Эх, çав тери матур партизан пулмаллаччĕ вăл çын!—шеллесе илчĕ Иван Кузьмич.

— Атте вырăнне эпĕ партизан пулас тетĕп!—пурне те илтĕнмелле, татăклăн каласа хучĕ ача.

— Партизан?!

— Ийя çав. Эпĕ те, ак Федька та...—Вăл хăйĕн юлташĕ çине кăтартрĕ.—Нимĕçсем ăна та ман пекех тăлăха хăвар-

чĕç. Çавăн пирки вара эпир иксĕмĕр те партизан пулма шут турăмăр, фрицсене таварма...

Партизансем пĕр-пĕрин çине пăхкаласа илчĕç, хăшĕсем ăшшăн кулса илчĕç.

Иван Кузьмич сўннĕ чĕлĕмне атă пуçне шаккаса тасатрĕ те, ăна майĕпе, васкамасăр, кĕсъине чиксе хучĕ. Унтан председателĕн ачине куçĕнчен пăхрĕ.

— Эсĕ мĕн ятлă-ха çав?—тесе ыйтрĕ вăл лăпкăн.

— Эпĕ-и? Володя. Эпĕ шăп Ленин çуралнă кун çуралнă та, атте мана юриех çав ята панă.

— Аван ят... Миçе çулта-ха эсĕ?

— Кăçал вуниккĕ тултартăм.

— А санăн юлташу тата?

— Федька-и? Вăл...

— Эпĕ кăçал Хĕрлĕ Çар уявĕнче вунтăватта кайрăм,— хăйĕншĕн хăех ответ пачĕ юлташĕ.

— Пит телейлĕ-çке эсир,—кăмăллăн кулса илчĕ Иван Кузьмич.—Пĕри Ленин кунĕсенче, тепри Хĕрлĕ Çар уявĕнче çуралнă...

Ачасем те кулса ячĕç.

— Хăвăр·та пит маттур ачасем пулмалла,—терĕ малалла Иван Кузьмич,—анчах та сире партизан пулма иртерех-ха, ачамсем! Ытла çамрăк эсир, сирĕн пĕртак ÿсес пулать... Партизан пуласси—çăмăл япала мар вăл, ăна валли вăй та, тÿсĕм те нумай кирлĕ.

Ĕç кун пек çавăрăнса тухасса ачасем ниепле те кĕтменччĕ. Вĕсен иккĕшин те кăмăлĕсем хуçăлчĕç.

— Çапла, ачасем, сирĕн каялла, киле каймалла пулать... Куншăн кÿренмелли нимĕн те çук,—хушса хучĕ командир кăшт тăрсан, Володьăпа Федька хытă пăлханнине кура.— Эсир алла пăшал та тытса курман пулĕ-ха, пеме те пĕлместĕр пулĕ...

Ку таранччен ним каламасăр тăнă ачасем, куна илтсен, харăсах хавăсланса кайрĕç.

— Эпир-и? Пеме пĕлместпĕр-и?

— Питĕ лайăх пĕлетпĕр! Икçĕр метртан йывăç çинчи çерçие персе антарма пултаратăп эпĕ.

— А винтовкисем пур-и-ха сирĕн?—ыйтрĕ партизансен-

чĕн пĕри. Партизансем хăйсене валли хĕçпăшал хăйсем тупаççĕ!

Анчах капла калани те ачасене парăнтарма пултараймарĕ.

— Уншăн ан кулян, мучи,—хирĕç тавăрчĕ хăюлланса кайнă Володя.—Нимĕç винтовкисемех пур пирĕн, пĕр ещĕк патрон та пур. Вĕсене эпир килте çĕр айне пытарса хунă. Анчах Иван Кузьмич кăмăлĕ пурĕпĕр çемçелмерĕ.

— Çук ачасем, ан та ыйтăр, май тухмасть. Текех ан та калаçăр ун çинчен... Эй, Павел Петрович! Çак ачасене халех апат çитерсе яр! Утма вăй ытларах пултăр,—терĕ вăл отряд поварне.

Апат çинĕ хыççăн пĕр партизанĕ ачасене вăрттăн сукмаксем тăрăх мăн çул çине илсе тухса ăсатрĕ. Володьăпа Федька пĕр-пĕрин çинелле калама çук кӳренӳллĕн пăхса илчĕç.

— Ну, мĕн тăвăпăр ĕнтĕ? ыйтрĕ Федька.

— Шухăшлас пулать,—терĕ Володя.

...Çакăн хыççăн виçĕ кун иртрĕ. Партизансем çывăхри

пĕр чугун çул станцинче таракан нимĕçсен гарнизонне тапăнса аркатма хатĕрленчĕç.

Иван Кузьмич, пуринчен ытла, тăшмана пачах та кĕтмен çĕртен, сасартăк пырса çапнипе ăнран кăларса ярасса шаннă. Çавăн пирки питĕ вăрттăн, никам сисмелле мар хатĕрленнĕ. Хăйсене палăртас мар тесе, командир хăйĕн партизанĕсене ку таврара пăшал пеме мар, ăнсăртран йывăç тураттине хуçса сас кăларма та чарнă.

Çапах та, отряда ачасем пырса кайнă хыççăн тăваттăмĕш кунĕнче, вăрманта икĕ хутчен пăшал сасси кĕрĕслетни илтĕнчĕ.

Куна илтсен Иван Кузьмич калама та çук пăлханса кайрĕ. Çавăнтах, отрядран вунпилĕк çын уйăрса, пĕтĕм таврари вăрмана „хыпашласа“ тухма хушрĕ. Вĕсемпе пĕрле хăй те кайрĕ.

Вăрманти шăплăха хускатакансене вĕсен нумай шыраса çӳремелле пулмарĕ. Çывăхри проççек çине тухсанах, партизансем хăйсем патнелле васкасах икĕ лаша кӳлнĕ лав пынине курчĕç.

— Руки вверх! Стой!—Лав тăпах чарăнчĕ. Партизансем ун çинче ларакан икĕ çын çине тинкерсе пăхрĕç те—тĕлĕнсе хытсах кайрĕç. Те чăн ку, те куçа курăнать...

— Володя! Федька!

Пăлханнипе, тата хытă чупнипе хашкакан пулнă Иван Кузьмич тăруках ним калаймасăр тăчĕ. Унтан, сыхланмалли-тумалли çинчен манса кайсах, хыттăн кăшкăрса ячĕ:

— Эсир... Эсир мĕн хăтланса çӳретĕр кунта, мур чĕппи-сем?! Ак эп сире пĕрре...

Анчах Володя ăна каласа пĕтерме памарĕ.

— Нимĕн те хăтланса çӳреместпĕр, Иван Кузьмич,—терĕ вăл хаваслăн,—сирĕн пата тепĕр хут килес терĕмĕр çеç.

— Лашисем камăн кусем?

— Лашисем... малтан нимĕçсен пулнă, халь—пирĕн ĕнтĕ.

Çур минутран лав сарлака çулçăллă вĕренесем айне пытанчĕ. Володя вара партизансене çав виçĕ кун хушшинче хăйсемпе мĕн-мĕн пулса иртни çинчен каласа пама тытăнчĕ.

— Питĕ кӳренсе тавăрăнтăмăр эпир сирĕн патран,—терĕ вăл.—Киле çитрĕмĕр те—иксĕмĕр те нимĕн тума та пĕл-

местпĕр, аптăранипе хуть те шыва кайса сик! Вара сирĕн пата тепĕр хут килме шут турăмăр. Мĕн пулать, мĕн килет... Винтовкăсене çĕр айĕнчен чавса кăлартăмăр, хутаçсене çимелли чикрĕмĕр те—вăрманалла шăвăнтăмăр. Унтан темлерен çакăн пек ăс пырса кĕчĕ пире: тавай отряда çитиччен пĕр-ик фрица шаккаса хурас, хамăр мĕн тума пултарнине малтанах кăтартас! Ĕнер каç çакăнта мăн çул хĕррине пытанса выртрăмăр та, нимĕçсене кĕтме тытăнтăмăр... Пирĕн хурлăха, çĕркаçа çул тăрăх пĕр йытă та иртмерĕ вĕт...

— Çĕрле çÿреме хăраççĕ вĕсем,—терĕ пĕр партизанĕ.

— Çапла пулмалла. Хĕвел тухсан тин куртăмăр вĕсене... Анчах—чылайăнччĕ, пĕр çирĕм çын пулĕ, станци еннелле кайрĕç. Вĕсене тапăнма хăрарăмăр. Унтан каллех кĕтрĕмĕр... Пĕр сехет пек вăхăт иртсен, урапа сасси илтĕнчĕ. Пăхатпăр—çак лав килет, ун çинче икĕ нимĕç лараççĕ. Самаях ÿсĕр курăнать, пĕри ларнă çĕртех çывăрать, тепри сăмса витĕр юрласа пырать. Кăт! тĕкрĕм Федькăна чавсапа. Эс—ку енчине, терĕм... Вара шăп хамăр выртнă тĕле çитсен—пĕр харăсах шаплаттартăмăр! Çывăраканни урапа çинчен кутăн

кĕпĕртетсе ӳкрĕ, тепри хăяккăн ӳксе аллинчи тилхепине пăрахрĕ... Эпир, часрах лав çине хăпарса ларса, кунталла хăвалама тапратрăмăр. Эп лашисене хăвалатăп, Федька çав вăхăтра нимĕçе хупласа пырать. Ак çак проççек тĕлне çитсен вара, тĕмеçки-тункати çине пăхмасăрах, часрах пăрăнса кĕрсе кайрăмăр. Ну, унтан пире эсир куртăр...

Володя калама чарăнсанах, Федька лав çине витнĕ брезента уçса ячĕ. Партизансен куçĕ умне сысна шăрчĕ пек сухаллă самăр нимĕç вилли тухса выртрĕ.

— О-о, ахаль салтак мар ку, фельдфебель!—терĕ Иван Кузьмич, нимĕçĕн погонĕсене курса.—Самай çăханнех лектернĕ!

— Тьфу! Эрех пички пекех... шăрш перет!—йĕрĕнчĕклĕн сурчĕ тепĕр партизанĕ.

Фельдфебелĕн кĕсъинчен хутсене кăларса илсен, Иван Кузьмич ăна вăрмана илсе кайса пăрахма хушрĕ. Унтан Федька урапа çинчи япаласене кăларма тапратрĕ. Икĕ автоматсăр пуçне, унта пĕтĕмпех çимелли тултарнă иккен: халь çеç пуснă сысна тушки, мăйĕсене пăра-пăра хунă хур-кăва-

калсем, икĕ ещĕк çăмарта, çур катка çу, пĕр витрê пыл...

— Тахăш ялта çаратнă-ха куна, бандитсем!—терĕ Иван Кузьмич çилĕпе.

— Халь пире юрарĕ ĕнтĕ,—хушса хучĕ тахăшĕ.

— Паллах, кăларса пăрахмастпăр!

— Отряда икĕ çĕнĕ боец хутшăннă ятпа ăшаланă кăвакал çиетпĕр, пылпа чей ĕçетпĕр эппин!—терĕ тепри.

— Юрĕ ĕнтĕ, ачисем чăнах та питĕ маттур иккен, хăйсен маттурлăхне ĕçпех кăтартса пачĕç,—терĕ те Иван Кузьмич, пĕчĕк партизансем çине пăхса кулса ячĕ:—Йышăнмаллах пулать сире!

Володьăпа Федькăшăн ку çав тери пысăк телей пулчĕ вара...

Цена 1 руб.

ЛЕОНИД АГАКОВ

Юные партизаны

[illegible]

на чувашском языке

Редактор Кузьма Чулгась

НГ 00193 Подписано к печати 16-VI-44 г. Заказ 1108 Тираж 10.000 экз.
Типография № 1 Упр. полиграфпром. при СНК ЧАССР г. Чебоксары